Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ,
чăваш халăх поэчĕ

ЧĂВАШ ПОЭЗИЙĔН УЛĂПĔ

Эпĕ Ухсай Яккăвĕ çырнисене ялан юратса вулаттăм. Хăйне вара малтанхи хут 1936 çулта курма тĕл килчĕ.

Çапла, Шупашкарти Хресчен çуртĕнче литература касĕ пулса иртрĕ. Сцена çине çамрăк кăна, хурарах сăнлă, пысăках мар каччă тухса тăчĕ. Литература касне ертсе пыракан сын:

— Ухсай Яккăвне сăмах парар, — терĕ. Сăвă хыççăн сăвă янăрать...

Малашлăх çыннисем — виç ывăл
Сикеççĕ висĕ сăпкара.
Пурте илемлĕ, пурте сывă,
Пурте Михайлов пек хура...

Çак йĕркесем ĕмĕрлĕхех манăн асăмра юлчĕç.

Ку вăл поэтăн 1935 çулта çырнă «Хыпар» ятлă сăвăри йĕркесем пулнă иккен. Çак çултах пулас Ĕпхӳре поэтăн «Савăнăç кĕнеки» пичетленсе тухрĕ. Унта чун-чĕрене çĕклекен, ăшăтакан, пысăк ăсталăхпа çырнă сăвă-юрă нумайăн мана савăнтарчĕ. Хам савăнăç синчен эпĕ поэта иккĕмĕш хут курнăççан каласа патăм. Вăл ман çине пăртак кулараххăн пăхса илчĕ те:

— «Савăнăç кĕнеки» манăн иккĕмĕш кĕнеке. Халĕ виççĕмĕш кĕнекене хатĕрлетĕп. Çырмалли, каламалли нумай. Ĕçлеме вăхăт çитменнипе аптăратăп, — терĕ. Чăнах та, Ухсай поэзи хирĕнче ĕмĕрĕпех тăрăшса ĕçлерĕ. Вăл вăрçăччен тăван литературăна «Роман романĕ», «Пуканесен бригади», «Туй», «Телей çулĕ», «Сăсар çĕлĕк», «Халăхăн ылтăн кĕнеки», «Кĕрхи октавăсем», «Кĕмĕл çĕрĕ» сăвăсемпе поэмăсем тата «Хура элчел», «Тутимĕр» ятлă сăвăллă драмăсем çырса парнелерĕ. Тӳрех каламалла: Ухсайăн пичетленсе тухнă кашни произведенийĕ пирĕншĕн ялан пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса юлнă. Çакна та çырса хăварам: эпĕ Яков Гаврилович Ухсайпа паллашнă çул Шупашкарта Чăвашсен хаçат шкулĕнче вĕренеттĕмччĕ. Унта час-часах писательсем пыратчĕç. Митта Васлейĕпе Уйăп Мишшиш, Ухсай Яккăвĕпе Александр Кăлкан писательсем пырса студентсемпе тĕлпулусем ирттеретчĕç. Çав вăхăтра Ухсай пирĕнпе пĕрле вĕренекен Васильева хушаматлă хĕрачапа паллашрĕ. Хĕрача çав тери вăтанатчĕ. Ухсай ятне каласанах йăл кулса яратчĕ те урăх ним те шарламастчĕ. Ун чухне Ухсай хăй те хăюсăртарахчĕ. Вăл эпир вĕреннĕ, пурăннă Володарски урамĕнчи Пичет çурчĕ патне пыратчĕ те мана чĕнтерсе кăларатчĕ. Эпĕ вара вăл ыйтнине пурнăçлаттăм, поэт кăмăллакан хĕрачана чĕнсе тухаттăм.

— Урамра сана Якку кĕтет, — теттĕм... Çакна студентсем те сисĕ-мĕн. Культ вăхăтĕнче, çав тери йывăр кунсенче, студентсен пухăвĕнче пирĕнпе пĕрле вĕренекен çамрăк поэт Пракка Сатур çинчен сӳтсе яврĕç. Ăна Петĕр Хусанкайпа час-часах тĕл пулать тесе айăплама пăхрĕç. Сатур вара ним шухăшласа тăмасăрах: «Ун пек эпĕ çеç мар, Давыдов та Ухсайпа та тĕл пулать», — тесе хучĕ. Эпĕ хăранипе çухалса кайрăм пулас, пĕр сăмах та чĕнеймерĕм. Пуху кĕрлесе кайрĕ. Юрать-ха Сатура та, мана та «тăшмансемпе» çыхăну тытакансен шутне кĕртсе айăпламарĕç.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах Ухсай фронта тухса кайрĕ. Вăл фашизма хирĕç пăшалпа та, перопа та паттăррăн çапăçрĕ. Поэтăн вăрçă вăхăтĕнче çырнă «Шăпчăк», «Шăллăм», «Вырăс хирĕнче», «Н-ски дивизири чăваш боецĕсемпе командирĕсем чăваш халăхне янă çыру» тата ытти произведенисем çырчĕ. Вĕсем совет çыннисен вăрçăри паттăрлăхĕпе хăюллăхне, вĕсем Тăван çĕршывăмăра чун-чĕререн юратнине кăтартса паракан произведенисем пулса юлчĕç.

Вăрçă хыççăн Яков Гаврилович Ухсай Шупашкара таврăнчĕ. Вăл Карл Маркс урамĕнчи пĕр çуртра пурăнатчĕ. Хваттерĕ пысăкчĕ. Унта кĕрсенех куç умне рояль тухса тăратчĕ. Ун чухне эпир Яков Гавриловичпа унăн мăшăрĕ, чăвашсен паллă писательници Мария Дмитриевна Ухсай музыкăна чун-чĕререн юратакан çынсем иккенне туйса тăраттăмăр.

Ухсай çамрăк писательсене яланах ырă канашсем парса пулăшма тăрăшатчĕ. 1945 çулта вăл мана тĕл пулчĕ те:

— Çулсем иртсе пыраççĕ. Эпĕ юлташсемпе каласса пăхрăм та сана хамăр Писательсен союзĕн членне илсен аван пулмалла, терĕм. Ху мĕнле шутлатăн! Эпĕ союза кĕме сана рекомендаци пама килĕшрĕм, — терĕ. Паллах, эпĕ питех те савăнтăм. Ухсая ырă сăмахшăн чĕререн тав турăм. Чăнах та, вăл мана рекомендаци çырса пачĕ. Унта çапла каланă: «Давыдов Василий Иванович, больше десяти лет работает в чувашской советской литературе, широко известен читателям, как автор многих талантливых песен.

За последние годы Давыдов написал ряд интересных произведений. Его поэма «Чемень» получила премию в конкурсе на лучшие художественные произведения к 25-летию Чувашской АССР.

Считаю Давыдова достойным быть членом Союза советских писателей СССР.

30 декабря 1947 года
член ССП СССР
Я. УХСАЙ».

Эпĕ хам ĕмĕрте ăста кăна çитмен, кама кăна курса калаçман пулĕ. Хамăр тăван культура çинчен сăмах тапратсан, яланах Петĕр Хусанкайпа Ухсай Яккăвĕн ячĕсене аса илеттĕм. Вĕсене Тăван çĕршывăмăрăн пур кĕтессинче те лайăх пĕлни мана савăнтаратчĕ, чун-чĕрере мăнаçлăх çурататчĕ.

Пĕр çулхине эпĕ Мускав çывăхĕнчи Малеевкăра, писательсен пултарулăх çуртĕнче, пултăм. Çапла, çуллахи ăшă, хĕвеллĕ кун вărман хĕррипе утса пыратăп. Пăхатăп та — мана хирĕç пысăках мар çын пырать. Эпĕ ăна халиччен курман. Паллашрăмăр. Ку вырăссен паллă поэчĕ Павел Железнов пулчĕ. Вăл эпĕ Чăвашран килнине пĕлсен тӳрех:

— Унта ман тус, Яков Гаврилович Ухсай, мĕнле пурăнать! — тесе ыйтрĕ.

— Аванах-ха. Ĕçлет. Тăрăшать, — терĕм эпĕ.

— Мана ун сăввисене куçарма тӳр килчĕ. Лайăх çырать. Чăваш халăхĕн пурнăçне, йăла-йĕркине тĕплĕн пĕлет. Унпа эсир тивĕçлипех мухтанма пултаратăр, — терĕ Железнов. Унтан вăл поэтăн «Чăваш чĕлхи» сăввине хăй хавхаланса куçарни çинчен каласа пачĕ.

— Унăн çав сăввине эсĕ астăватăн-и! — терĕ вăл. Эпĕ вара: «Астăватăп. Сăвă çакăн пек йĕркесемпе вĕçленетчĕ пулас:

Сана паян тиркевлĕ хурлаканĕ
Ăста, кам пулĕ пысăк
çĕр çинче, —
Мухтатăп эпĕ, гварди капитанĕ,
Сана хĕвел те уйăх умĕнче, —
терĕм».

— Акă, халь çав йĕркесенех, эпĕ куçарнисене, итлĕр-ха. Вырăсла вĕсем мĕнле янăраççĕ, — терĕ те куçарусă поэт сăвă калама тытăнчĕ. Юлашкинчен вăл: «Мĕнле хăватлă сăмахсемпе вĕçленĕ поэт хăйĕн тăван чĕлхи çинчен хавхаланса çырнă сăввине», — терĕ.

— Эсĕ ку сăвва 1950 çулта Мускавра чăваш литературипе искусствин кунĕсем иртнĕ чух Союзсен çурчĕн колоннăллă залĕнче вуласа панăччĕ пулас, — терĕм эпĕ.

— Тĕрĕс. Эпĕ ăна вуласа панăччĕ.

— Литература касне пынă сынсем ку сăвва кăмăлласа итлерĕç, апă çупса йышăнчĕç, — терĕм эпĕ. Железнов пăртак кулараххăн ман çине пăхса илчĕ те:

— Ухсай çав вăл. Ахаль мар ăна эпир хисеплетпĕр. Ун ăсталăхĕнчен, пултарулăхĕнчен тĕлĕнетпĕр. Шупашкара таврăнсанах ăна манран пысăк салам кала. Мускавра унăн сывăх тусĕсенчен пĕри — Павел Железнов поэт пурăннине яланах аса илсе пурăнтăр, — терĕ.

Çакна та каласа хăварассăм килет: 1950 çулта Мускавра Чăваш литературипе искусствин касĕсем пулнă чух Горбунов ячĕпе хисепленекен заводăн Культура керменĕнче ирттернĕ каçа Александр Трифонович Твардовский ертсе пычĕ. Литература касĕ пуçланиччен вăл пирĕнпе, чăваш писателĕсемпе, ăшшăн, кăмăллăн каласса ларчĕ. Александр Трифонович йĕри-тавра çаврăнса пăхрĕ те:

— Сирĕн Ухсай ăçта — курăнмасть! — тесе ыйтрĕ. Çав вăхăтра, сăмах çинех, Ухсай пырса кĕчĕ. Икĕ пысăк поэт пĕр-пĕрне ырă сунса алă пачĕç те кăмăллăн каласма пуçларĕç. Твардовский Ухсая:

— Ăçта эсĕ, тусăм, юлташусенчен кая юлса çÿретĕн! — терĕ пăртак кулараххăн. Эпĕ вĕсем ăшшăн каласса ларнине ытараймасăр пăхса тăратăп. Çакна Ухсай туйрĕ пулас, ман еннелле пăхса илчĕ те:

— Паллашăр, Александр Трифонович, ку пирĕн çамрăк поэт Василий Давыдов, — терĕ. Çапла вара, мана Твардовскипе паллаштаракан сынсенчен пĕри Ухсай пулчĕ. Твардовскипе эпĕ хамăн пурнăçра пĕр-икĕ хутчен тĕл пулса каласнă. Яланах пирĕн каласу Ухсайран пуçланатчĕ.

— Яков мĕнле пурăнать! Сывлăхĕ аванах-и, мĕн çырать! — тесе ыйтаыйта пĕлетчĕ.

Акă, тата тепĕр асаилу. Пĕр çулхине эпĕ Мускавра издательствăсенче ĕçлекен редакторсен курсĕнче вĕрентĕм. Çав вăхăтра пире Переделкинри писательсен пултарулăх çуртне Корней Иванович Чуковский писательпе тĕл пулма илсе кайрĕç. Корней Иванович пире çав тери тараватт кĕтсе илчĕ. Вăл хăй патне пынă редакторсемпе паллашма пуçларĕ. Черет ман пата та çитрĕ.

— Эсĕ ăçтан пулатăн! Паллашар, — терĕ Корней Иванович.

— Шупашкартан. Чăваш патшалăх издательствинче редакторта ĕçлетĕп, — терĕм. Писатель эпĕ чăваш иккенне пĕлсенех Ухсай çинчен ыйтса пĕлме пуçларĕ.

—Эпĕ нумаях пулмасть унăн «Кĕлпук Мучи» поэмине вуларăм. Аван çырнă. Поэма кăмăла кайрĕ. Киле таврăнсан, ăна манран салам кала, — терĕ. Эпĕ çак асран кайми тĕлпулу хыççăн хамăн кук кĕнекине çапла çырса хутăм:

Нихçан лармасть пуçне усса
Авалхи тус, Якку Ухсай.
Çĕрне-кунне пĕлмест, çырать,
Çĕр ĕçченне чунтан мухтать, —
терĕм.

Ухсай, пурнăçра мĕнле те пулин йывăрлăх килсе тухсан, хăйне лăпкă тытма тăрăшатчĕ. Çапла, Кăкшăмра эпĕ, Яков Ухсай, Петĕр Чичканов пĕрле мунчана кайрăмăр. Мунчи çав тери вĕри. Çĕнĕ милĕкпе пĕрер хут çапăннă хыççăн мунча умне тухса ларма шутларăмăр. Хамăр шăкăлшăкăл калаçма пуçларăмăр. Унччен те пулмарĕ, пирĕнпе ларакан Чичкансв урайне персе анчĕ. Мĕн тумалла! Ухсайпа иксĕмĕр те хыпăнса ÿкрĕмĕр. Пуçа темле шухăш та пырса кĕрет.

— Васлей, питех çухалса ан кай-ха. Кунта тухтăр çук. Камран пулăшу кĕтес. Атя Петĕре хăвăрт кăна пулăшу парар, икĕ аллине тытса искусственнăй майпа сывлаттарар, — терĕ. Тĕлĕнмелле, çапла туни пулăшрĕ пулас. Чичканов хаш! сывласа ячĕ. Куçне уçрĕ. Пире те чун кĕрсе кайрĕ.

— Мĕн пулса иртнине ăнланса илтĕн-и эсĕ! — тесе ыйтатпăр Чичкановран.

— Нимĕн те ăнланмастăп, нимĕн те астумастăп, — тет Чичканов. Ăна сĕрĕм тивнĕ пулнă-мĕн.

Акă, тата. Кăкшăмрах, кĕтмен çĕртен, Яков Гаврилович мăнукĕ, Мĕкĕте, пăч çухалчĕ. Кунта вăрманлă вырăн. Атăл та çумрах. Мĕн тумалла! Эпир пурте хыпăнса ÿкрĕмĕр. Ним тума та пĕлместпĕр.

«Хуйхăрса ларнипе ĕç пулмасть. Атьăр пурте шырама каяр. Пĕчĕк Мĕкĕтене тупасах пулать», — терĕ Яков Гаврилович. Пурте ача шырама тухса кайрăмăр. Чылай вăхăт иртрĕ. Çук, Мĕкĕтене тупаймастпăр. Хуйхăрса каласса тăнă вăхăтра курах кайрăмăр. Мĕкĕтене амăшĕ çавăтнă, Яков Гаврилович патне илсе пырать.

— Ăçта пулнă вăл! — терĕмĕр пурте харăсах.

«Хĕрсемпе каччăсем ташлакан вырăнта. Алă çупса тăрать», — терĕ ача амăшĕ, Елена Ухсай.

Ухсайсемпе эпир яланах килĕштерсе пурăнна. Яков Гаврилович час-часах пирĕн пата пыратчĕ. Вăл ман кĕрекере те сахал мар пулнă. Ухсай пур чухне хваттерте яланах сăвă-юрă янăраса тăратчĕ. Эпир, Марье мăшăрăмпа пĕрле, Ухсай сăввипе Федор Васильев композитор çырнă «Кÿршĕ каччи» юрра шăрантараттăмăр. Çак юрра питех те кăмăлланттăмăр. Çавна пула та ĕнтĕ ăна темиçе хутчен юрла-юрла параттăмăр. Ухсай савăнса итлесе ларатчĕ. Çавăн пекех Ухсай хăй сăввисене вуласа панине юрататчĕ. Якку Гаврилч хăнана пырсан эпир яланах вăл парнеленĕ «Лирика» кĕнекине алла илеттĕмĕр те унти сăвăсене вулама пуçлаттăмăр. Ухсай пĕр шавламасăр итлесе ларатчĕ. Чунтан савăнатчĕ поэт.

Ухсай мухтанине юратмастчĕ. Акă, пĕрре çапла Марье мăшăрăм аш кукли пĕçерчĕ.

«Вăççа, çакна Якку Гавриловича кайса çитерер мар-и! Вăл çăкăр-тăвара хисеплекен çын», — терĕ. Эпĕ киленшрĕм. Яков Гаврилович килтех иккен. Ун çумĕнче Ульха ятлă хĕрĕн ывăлĕ — Энтри тăрать.

«Эпир Сирĕн валли халь çеç пĕçернĕ аш кукли илсе килтĕмĕр. Пирĕн кучченеçе çисе пăхмăр-ши!» — терĕмĕр. Яков Гаврилович çăкăр-тăваршăн тав турĕ те пирĕнпе пĕрле кукăль çиме пуçларĕ.

Эпĕ чăтаймарăм, пăртак мухтанса илме шутларăм пулас.

«Яков Гаврилович, сана ман Марье чăнах та хисеплет. Паян та акă ÿркенмерĕ, кучченеçпе килчĕ. Кăмăллать вăл сана», — терĕм. Ухсай ман çине пăртак кулараххăн пăхса илчĕ те:

«Пĕлетĕн-и, Вăççа, хăй лашипе мухтанакан чăваш — çур ухмах, хăй арăмĕпе мухтанакан çын тăр ухмах», — тесе хучĕ. Пурте кулса ятăмăр. Кÿренместĕмĕр эпир Ухсая. Вăл ун пек сăмахсене кураймасăр каламаннине туйса илеттĕмĕр.

Эпĕ Ухсайпа пĕрле вулакансемпе сахал мар тĕлпулусем ирттернĕ. Пĕр çулхине эпир, Чăваш, Пушкăрт писателĕсем поэт çуралнă Слакпуçĕнче пултăмăр. Ял ĕçченĕсем пире, хăнисен хаклă ентешне Ухсая ăшшăн, çăкăр-тăварпа кĕтсе илчĕç. Яков Гаврилович слакпуçсен çăкăрне алла илсе чуп турĕ те:

«Тавах сире, тăванăмсем, пире çăкăр-тăварпа кĕтсе илнишĕн. Çĕр çинче çăкăртан асли нимĕн те çук. Вăл пулсан пурнăç та, сăвă-юрă та пулать. Эпир сире пĕтĕм чун-чĕререн ырлăхсывлăх сунатпăр. Ĕçĕр-хĕлĕр яланах ăнса пытăр. Сĕтелĕрсем çинче яланах çакăн пек çăкăр пултăр», — терĕ. Ентешсемпе тĕл пулнă чух поэт кÿренсе калаçни те пулчĕ.

«Тăванăмсем, чун ыратать. Эсир çутçанталăка хакласах каймастăр. Эпĕ ача чухне пирĕн таврара йывăççсем кашласа ларатчĕç. Çутçанталăк мĕнле пуянччĕ! Ун илемĕпе савăнса пурăнаттăмăр. Халĕ вара çулсерен çав пуянлăх, çав илемлĕх пĕтсе пырать. Йывăççене касса пĕтеретпĕр. Ку çав тери хитре мар япала. Акă, мĕншĕн чунăм ыратать», — терĕ вăл.

Слакпуçсем кÿренмерĕç поэта. «Якку Гаврилович тĕрĕс калать. Ĕçлемелле. Çутçанталăка сыхласа хăвармалла», — терĕç вĕсем.

Çул хыççăн çул иртрĕ. Поэт утмăл çул тултарчĕ. Ун юбилейне пĕтĕм тăван халăхăмăр чаплăн паллă туса ирттерчĕ. И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче пулас юбиляр ячĕпе сăвă-юрă янăраса тăчĕ. Ухсая тĕрлĕ организацисем, тăванĕсем, тусĕсемпе юлташĕсем саламларĕç. Эпĕ те поэта халалласа çырнă «Ларатăп эп сĕтел пуçне» сăвва каласа патăм:

Чуна темле кичем чухне
Ларатăп эп сĕтел пуçне,
Илеп Ухсай сăввисене,
Тарпа, юнпа çырнисене.

Туятăп эпĕ Ухсайра
Тăван чĕлхемĕр илемне.

Эпир хальхи саманара
Яман чăваш ятне, чысне...

Ухсайăн Тăван çĕршывăмăрăн пур кĕтессисенче те çывăх тусĕсем пурччĕ. Вăт ман çывăх юлташăмпа Новгород хулинче пурăнакан вырăс писателĕпе Александр Васильевич Ежовпа туслăччĕ. Ун çинчен яланах ырăпа калаçатчĕ.

«Сашăна çĕршывĕпе паллă писатель Федор Абрамов çав тери хисеплет. Вĕсем çывăх туссем. Ежовра чăн-чăн вырăс çынни чунĕ, ĕçченлĕхĕ пур. Вăл санăн та çывăх тусу. Çав туслăха нихăçан та ан çухат.

Ежов часах 60 çул тултарать. Ун патне халех саламлă телеграмма ярар», — терĕ.

Çав кунах Новгорода çакăн пек телеграмма ятăмăр: «Поздравляем, дорогой Саша, с шестидесятилетием. Желаем тебе былинное здоровье, русскую удаль, чувашскую скромность.

С чувашским саламом Яков Ухсай, Васьлей Давыдов-Анатри. 26 апреля 1982 года».

Александр Ежов пĕр-икĕ хутчен те пирĕн республикăра пулчĕ. Шупашкара çитсенех вăл Якку Гаврилович патне васкатчĕ. Ĕмĕр манми тăвансем пек калаçатчĕç вара вĕсем. Ухсай яланах хăй Твардовскипе мĕнле паллашни çинчен аса илсе кала-кала паратчĕ.

«Вырăссен аслă поэчĕпе Александр Трофимовичпа паллашни, манăн пурнăçра çав терех ырă йĕр хăварчĕ. Эпир пĕр-пĕрне лайăх ăнланнă. Вăл Борис Иринген вырăсла куçарнă «Нарспи» поэмăна редакцилерĕ, кĕнекен умсăмахне те çырчĕ. Ăна пуриншĕн те тавах!» — тетчĕ.

1981 çулта Ухсай 70 çул тултарчĕ. Пирĕн тăван халăхăмăр çак юбилее лайăх ирттерчĕ. Тăван çĕршывăмăр, поэтăн пархатарлă ĕçне-хĕлне тивĕçлипе хакласа, Ленин орденĕпе наградăларĕ. Эпир, чăваш поэчĕсем, пурте тенĕ пекех çак чаплă юбилее хутшăнма тăрăшрăмăр. Эпĕ те халăх поэтне халалласа «Пирĕн Ухсай» ятлă пысăк сăвă çыртăм. Унта аслă поэта хам мĕнле ăнланни çинчен, унăн тăван халăхшăн тунă пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ çинчен çырса кăтартма тăрăшрăм. Ку сăвва поэта чысланă чаплă ларусенче Шупашкарта, унтан Мускавра Александр Фадеев ячĕпе хисепленекен литература çуртĕнче вуласа патăм. Сăввăма итлекенсем кăмăлласа йышăнни мана та чун-чĕререн савăнтарчĕ, хамăр хушшăмăрти туслăха татах та çирĕплетрĕ. 1981 çулхи сентябрĕн 18-мĕшĕ. Эпĕ Ухсай килĕнче. Поэтпа чун-чĕререн калаçса ларатпăр. «Çулсем хăвăрт иртеççĕ. Эсĕ те акă çитмĕле çывхарса пыратăн. Хăвăн хаклă вăхăтна чылай чухне усăсăр ирттеретĕн. Вăй-хал пур чухне çырас пулать. Çĕре юратакансене мухтамалла. Кахалсене, харампырсене питлемелле. Вĕсем пире пурăнма ан чăрмантарччăр.

Пирĕн Кĕлпук пек пулмалла», — терĕ Ухсай. Унтан вăл хăй умĕнче выртакан «Сельские поэмы» кĕнекине илчĕ те мана парнелерĕ. Кĕнекен малтанхи листи çине çапла çырса хучĕ: «Тĕрĕс сăмаха пат татса калакан талантлă тусăма — Васлее. Я. Ухсай 18.9.1981».

1986 çулта Ухсай сывлăхĕ начарланма пуçларĕ. Эпир пĕрле больницăра та выртрăмăр. Çапла пĕрре, унпа калаçса ларнă чухне, хам та асăрхаман, вилĕм çинчен сăмах пуçларăм. Яков Гаврилович мана савăнтах хулпуççинчен хытах тĕртсе илчĕ те:

«Мĕн эс, Васса, вилĕм çинчен калаçма пуçларăн. Поэтсем вилме мар, пурăнма çуралаççĕ. Ăнланатăн-и çавна», — терĕ. Эпĕ урăх пĕр сăмах та калаймарăм. Поэта ăнлантăм пулас. Эпĕ савăнтах Яков Гаврилович сăмахне ăнланнине палăртас тесе пулĕ «Тăван поэтăмăр, Ухсай» сăввăма сасăпах вуласа патăм:

Совет поэчĕ эс, Ухсай, —
Мĕн ыррине пĕрле пухса
Пиллетĕн ĕçлĕ халăха, —
Пире çав хаклă, çав паха...

Ухсай кулса ячĕ. Манпа кÿренсе калаçнине урăх палăртмарĕ.

Пĕррехинче эпĕ чăваш халăх писателĕ Александр Артемьев килĕнче пултăм. Вăл мана хăй патне Ухсай çырнă çырăва пачĕ. Ăна поэт 1958 çулхи мартăн 12-мĕшĕнче çырнă-мĕн. Ку çыру копине эпĕ халăх писателĕ ирĕк панипе хам архив валли çырса илтĕм. Çак çыру копине ан çухалтăр тесе, кĕскетсе те пулин, хам çырнă асаилÿ çине кĕртсе хăварсан та юрать пулĕ терĕм: «Эпĕ сана Шупашкартан хуса кăларса ярасшăнччĕ, анчах унта пырса тухма кăмăл та, вăхăт та çук, — тесе çырать Ухсай, — эппин, яла тухса кайрăн... Халĕ ĕнтĕ Бальзак пек кăкăр тирĕ çинче сăм ÿстер, ăна чĕпĕткелесе çыр та çыр, аслă çынсене ĕçпе тĕлĕнтер, вĕçкĕннисене вĕчĕхтер...

Шупашкара çуркуннеччен, шыв-шур типиччен, пырасшăн мар-ха эпĕ. Унта мансăр та эрех ĕçекен нумай...

Сана та, килйышна та çĕр çĕмĕрмелле сывлăх сунатăп. Уйăп пек самăр, Бурнаевский пек ырхан, Шавлы пек çăтă, Куçма пек суеççĕ, Долгов пек типĕ..., Лашман пек йăваш ан пулăр, хăвăрла пурăнăр, пĕр-пĕринпе ан харкашăр, пĕр-пĕрин çамки çине Леонид Агаков ячĕпе тăракан кăвак митал ан çакăр.

Ринăна хĕрхен, асту, — хăвна ун пек чипер пăхакан çын тупаймăн.

Ырлăх сунакан Я. Ухсай».

Ку çырăвăн оригиналĕ Александр Артемьев писатель архивĕнче упранать. Ун копине эпĕ ман асаилÿре те пултăр тесе шутларăм.

Яков Гаврилович Ухсайăн юлашки кунĕсем çинчен ман блокнотра çакăн пек çырса хăварнă йĕркесем пур: «1986 çулхи юнĕн 11-мĕшĕ. Пире Николай Дедушкин писатель Ухсай больницăра выртни, сывлăхĕ çав тери начарланса çитни çинчен каларĕ.

Марье мăшăрăмпа ун патне кайрăмăр.

— Яков Гавриловича ĕнер килне илсе кайрĕç, — терĕç больницăра ĕçлекенсем.

Эпĕ тÿрех ун хваттерне васкарăм. Ухсай килĕнче пĕччен. Вырăн çинче выртать.

— Аçта эсĕ çухалса пурăнатăн! — тесе ыйтрĕ вăл. Эпĕ ăна хăй патне мĕншĕн час-час килсе çÿреймени çинчен каларăм, хам та сывалма санаторие кайни çинчен пĕлтертĕм. Чылайччен калаçса лартăмăр.

— Çитес эрнере Вăрмар районне каятпăр. Социализмла Ĕç Геройĕ Сергей Лукин ертсе пыракан Мичурин ячĕпе хисепленекен колхоз ĕçченĕсемпе тĕл пулма шутлатпăр, — терĕм эпĕ. Çапла калаçса ларнă чух Яков Гаврилович вырăн çинчен пуçне çĕклерĕ те:

— Лайăх япала. Акă, камран çĕре юратма, ял ĕçченне хисеплеме вĕренмелле! Лукин чăн-чăн герой! Вăл çĕр ĕçченĕсен шанăçне тÿрре кăларчĕ. Ун колхозĕнче пурте йĕркеллĕ, ĕç те ăнса пырать. Ял ĕçченĕсем те лайăх пурăнаççĕ. Манран салам калăр, — терĕ.

1986 çул хĕвеллĕ çуллахи кун. Ирхине кĕтмен çĕртен йывăр хыпар илтĕмĕр. Пирĕн çывăх юлташăмăр, ĕçри тусăмăр Яков Гаврилович Ухсай вилни çинчен пĕлтĕмĕр.

Чăваш халăхĕ — хăйĕн чунтан юратнă поэчĕпе Ухсайпа ĕмĕрлĕхе уйăрăлчĕ. Поэт каласа хăварнине асра тытса ăна хăй çуралнă Пушкăртри Слакпуç ялĕ çумĕнчи Кĕслет çине пытарчĕç. Халăх поэчĕн ÿтне Пушкăрта ăсатнă чух самолет Шупашкар тĕлĕнче, тÿпере темиçе хутчен вĕçсе çаврăнчĕ. Ухсай ĕмĕрлĕхех тăван республикăпа сывпулашрĕ. Ухсай вилни пĕтĕм Тăван çĕршывăмăршăн пысăк çухату пулчĕ. Ман пата та тусăмăрсемпе юлташăмсенчен, тăвансенчен хуйхăллă çырусем килчĕç.

«Очень опечален кончиной дорогого Якова Гавриловича Ухсая. Ушел от нас большой поэт, замечательный человек и друг. Незабываемые в моей памяти встречи с ним, и особенно последний. На съезде Союза писателей РСФСР. Но что поделаешь! Все мы не вечны, и каждому судьбой определен свой срок. Якова Гавриловича буду помнить всегда», тесе çырчĕ ман пата Новгород хулинчен Александр Ежов тусăмăр.

Акă, тата: «Дорогой Василий Иванович! Пакет с печальной газетой получил. Вместе с вами скорблю о нашем великом Ухсае.

Очень сожалел, что меня дома не было, когда его навеки соединили с его родной землей. При первой же возможности я навещу его могилу.

Передайте мои приветы всем хорошим людям.

Жму руки Ваши. Мустай Карим».

Юлашкинчен çакна çырса хăварасшăн:

Эпĕ Яков Гаврилович Ухсая тăван поэзири чăн-чăн улăп тесе шутланă. Чăнах та, вăл çапла. Ухсай — халăх поэчĕ! Ухсай — вилĕмсĕр поэт!